## «Çыру тĕрри»

Чăваш халăх ӳнерĕ
Нумай енлĕ те пуян.
Чăваш тĕрри-эрешĕ
Хăй евĕрлĕхпе пуян.

Чăвашăн çи-пуçĕнче
Илем тĕнчи сисĕнет.
Асамлă эрешсенче
«Çыру тĕрри» илĕртет.

Мĕн авалтанах хĕрсем
Килтех тĕртнĕ пусмине.
Тĕрлемелли çипсене
Пĕветнĕ тĕрлĕ тĕспе.

Тăрăшсах эрешсене
Тĕрленĕ шур пир çине.
Суйланă çипписене
Çут çанталăк тĕслине.

Асамлă «çыру тĕрри»
Капăрланнă эрешре.
Тĕрлĕ-тĕрлĕ чикĕмпе
Тĕрленĕ кĕпесене.

«Чăваш кĕпи – эрешлĕ,
Эрешлĕ те çыруллă», –
Тенĕ авал чăвашсем.
Пĕлнĕ ăна «вулама».

Тĕрĕ çинчи эрешсем
Пĕлтернĕ чĕр чунсене,
Курăка, йывăçсене,
Çынсене, карапсене.

Пуç çапнă çăлтăрсене,
Хĕвелпе шыва, вута.
Çак паллăсем тĕрĕре
Пулнă малти вырăнта.

Авалхи эрешсенче
Тĕнче тытăмне туйса,
Хăйсем мĕнле курнине,
Тăрăшнă ăнлантарма.

Чăваш ăс-хакăлĕпе
Ăраскал, кăмăл-сипет,
Йăла-йĕрке сыхланса
Юлнă тĕрĕ-эрешре.

Илемлĕ эрешсенче
Халăх чунĕ упранать.
Вĕсен ăсталăхĕнче
Хитрелĕхĕ палăрать.

Çĕр пин тĕрĕ çĕрĕнче
Упрар чăваш тĕррине.
Ăна ӳсме пулăшар,
Пуласлăхне çул парар.
17.11.2020.

Светлана Яруткина,
Хĕрлĕ Чутай районĕ, Хусанушкăнь тĕп шкулĕнче
чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекен.